*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

1 (2413) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
кăрлач, 10

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ **КИЛ** ХŸТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

**ШУХĂШ**

## Культурăллă-и эпир?

Чăнах, культурăллă халăх-и эпир, Чăваш Енре пурăнакансем? Йĕри-тавра, хамăра пăхсан, çакăн пек ыйту хăех тухса тăрать. Шел, чуна лăплантаракан хурав пама пултараймастпăр. Мĕншĕн тетĕр-и?

Мĕншĕн тесен хальлĕхе эпир пысăк культурăллах мар. Çакна çирĕплетме вун-вун тĕслĕх илсе кăтартма пулать.

...Кунсерен пирĕнтен ытларахăшĕ автобус е троллейбус чарăнăвневаскать. Акă, автобус çитсе чарăнать те, пассажирсем пĕр-пĕрне чышса-хирсе унта кĕме васкаççĕ. Ватти-вĕттине таптаса хăварни те пулкалать. Этемле мар. Тискер чĕр чунсем пек. Пĕр-пĕрне хисеплемени, сума суманни ку.

...Культура çуртĕнче дискотека пырать. Яшсемпе хĕрсем ўсĕр, пĕр-пĕринпе вăрçăнаççĕ. Вăйă-ташăра йĕрке çук: пĕр-пĕрне тĕккелеççĕ, кăшкăрашаççĕ, шăхăраççĕ. Кунта ĕçлекенсем асăрхаттарнине хирĕç усал сăмахсемпе таврăççĕ. Çакă культурăллă канни-ши?

...Панкрута тухас патне çитнĕ колхозра тракторист суха тăвать. Касăсем тансăр-тĕнсĕр, кукăр-макăр, плуг хыççăн шăйрăк çине шăйрăк юлать. Ăна культиваторпа тўрлетсе çитерейместĕ. Калча тикĕс шăтса тухаймасть. Кĕркунне тĕш тырă тухăçĕ япăх. Çакă пирĕн çĕр ĕç культури çуккине пĕлтерет.

...Ирхине кравать çинчен тăрсан вырăна тирпейлĕн пуçтарса хăварманнинчен пуçланать те пирĕн культурăсăрлăх каçхине ўсĕрле, çăвăнмасăр, хура урапах çав вырăна кĕрсе выртнипе вĕçленет. Çапла кунран-кун. Аслисене кура ачасем вĕренеççĕ.

...Урам тăрăх силленсе утакан, хырăнман, питне çуман ўсĕрсем хунаса кайни эпир культурăллă халăх пулнине пĕлтерет-и? Тĕрĕссипе, пирĕн культура шайĕ çулсерен чакса пыни чуна çўçентерет. Халăх хаçат-журнал, кĕнеке вулама пăрахрĕ. Çакна хăшĕ-пĕри ĕç çыннисен шалăвĕ пĕчĕккипе сăлтавласшăн. Ĕç укçи совет тапхăрĕнче те каçса каймалла пысăк пулман, çапах та кашни çемьене 3-7 тĕрлĕ хаçат-журнал килсе тăнă, кашни килтех çемье библиотеки пулнă. Халĕ кĕнеке çўлĕкне хваттертен кăларса пенĕ, ун вырăнне эрех сентрисем йышăннă. Лавккаран 200-300 тенкĕ тăракан çур литр эрехе туянса тухма хаклă мар, çав хаках тăракан хаçат-журнала çур çуллăха çырăнма вара хаклă. Сурнă халь халăх чун апачĕ çине, пыра хăватлипе чўхесе пултăр. Вĕрентекенсем те хаçат-журнал çырăнса илме пăрахрĕç пулсан малашне мĕн кĕтмелле?

...Вунă-çирĕм çул каялла тулăх тыр-пулпа чуна савăнтарнă уй-хирсенче халĕ çум курăкĕ чашкăрса ўсет. Хăш-пĕр уйсене вăрман хупласа илнĕ. Çакă никама та пăшăрхантармасть. Ĕçлеме пултаракан арçынсем тăван ялтан аякра – Мускавра, Чулхулара, Хусанта, Сочире – тарçăсем пек чи йывăр ĕçре тертленеççĕ. Аякран таврăнаççĕ те – пуçланать сапантуй. Ашшĕ-амăшне, мăшăрне, ачи-пăчине паллами пуличчен эрни-эрнипе эрех кўпеççĕ. Тăван уй-хир шухăшĕ-и унта? Вĕсемшĕн унта хăть пĕр курăк ан шăттăр. Миçе тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илмелĕх укçа ĕçсе яраççĕ-ши, мăнтарăнсем?

2-мĕш стр. ➔



**ПАЯН** кун тăршшĕ 7 сехет те 25 минут. Уйăх ўсет. Улăм ури, капан таврашне пас тытсан – çу кунĕсем çумăрлă пулĕç.

**ЫРАН** – хăрамалли кун. Çак кун каçхине усал вăйсем çўреççĕ тенĕ. Ачасене усал ан çыпăçтăр тесе кĕлтунă. Çил çурçĕр енчен вĕрсен сивĕсем пуçланасса кĕтнĕ.

**ВИÇМИНЕ** – Аниськин кунĕ. Вăл кун сысна пуснă, ăш-чиккипе шўрпе пĕçернĕ. Çак кунран çанталăк сивĕтет.

**ЫЙТУ-ХУРАВ**

## Кăркка кăсăклантарать

**?** **«Хресчен сасси-Кил» хаçата кашни çулах çырăнса илетĕп. Унта пичетленекен сĕнўсемпе усă куратăп. Сакăр вунă çула çитсе пыратăп пулсан та сирĕнтен вĕренмелли чылай. Хаçат çывăх юлташ вырăннех маншăн. Ыйтусене тĕплĕн хуравланăшăн тавах сире.**

**Кăçал пуçласа кăркка ўстерсе пăхрăм. Чиперех пек. Вилмерĕç. Çапах та çак кайăк çинчен май пур таран ытларах пĕлес килет. Мĕн çитерсен аванрах? Миçе кило тайма пултараççĕ? Какайĕ мĕнрен усăллă? Миçе градус сивве чăтать? Тархасшăн, çырса пĕлтерсемĕр. Чăтăмсăррăн кĕтетĕп.**

**Ипатий ПЫРКИН. Елчĕк районĕ, Аслă Шăхал ялĕ.**

Хисеплĕ Ипатий Павлович! Тавах сире ырă сăмахсемшĕн.

Кăрккана çутă та типĕ вите кирлĕ. Витĕр çил тивекен çĕрте вĕсем хăвăртах чирлеççĕ. Уйрăмах çакă чĕпписемшĕн хăрушă: сивĕ те нўрĕ пулсан ушкăнĕпех вилме пултараççĕ. Çуллахи вăхăтра витере 20 градус ăшă пултăр, хĕлле – 5 градус сивĕ. 15-20 градус сивве çăмăллăн чăтса ирттереççĕ.

### Тăтăшах уçăлтармалла

Кăрккасем лармалли каштана (9х9 е 7х7 см) урайĕнчен 70 см çўллĕшĕнче вырнаçтармалла, кашнине 40-50 см яхăн вырăн тивĕçтĕр. Çăмарта тумалли йăвана тĕттĕмрех кĕтесе вырнаçтармалла (5 пуçа – пĕр йăва). Витере кăрккасене çăвăнма хăйăрпа тата кĕлпе тултарнă савăтсем пулмалла. Улăм ай сарăмне вăхăт-вăхăтăн улăштарса тăмалла.

Кăркка чĕпписене килти чăхсемпе пĕрле тытма хушмаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен организмĕ самай черченрех: чирлеме пултараççĕ.

Кăрккасене шартлама сивĕре кăна уçăлма кăлармаççĕ. Ытти чухне яланах уçăлтармалла. Кунне виçĕ хутран кая мар çитермелле. Лайăх ўсчĕр тесен вĕсене ытларах белоклă тата витаминлă апат çитермелле. Белоклă апат шутне тăпăрчă, турăх, çăмарта, пулă, тăварланă килька, авăртнă пăрça, фасоль кĕреççĕ.

### Мĕн çитермелле?

Кăркка чĕпписем симĕс купăста, люцерна, вĕлтĕрен, мăян, кăшман çулçине юратса çиеççĕ. Симĕс сухан пыршăлăх чирĕсемпе чирлесрен пулăшать, уйрăмах пирвайхи эрнере кирлĕ вăл. Çапах та сухана кăнтăрлаччен çитермелле, каçпа парсан вĕсен шыв ĕçес килĕ, çавна май питĕ канăçсăрланĕç.

Кăркка чĕпписене йывăç валашкаран кăна çитермелле (пуçне е сăмсине амантасран асăрханса). Авăртнă куккуруса (10 пай), пăрçана (30), тулла (60) пĕçернĕ çăмартапа, тăпăрчăпа хутăштарса памалла. Пăтратса панине мĕнле тумалла-ха? Турăха е йўçнĕ сĕте çĕр улми, теркăланă кишĕр, пулă, тăпăрчă, ешĕл çимĕç хушса пăтратмалла. Çакнашкал апат хăвăрт пăсăлнине шута илсе ăна çитерес умĕн çеç хатĕрлемелле. Çур сехетре пĕтĕмпех çисе ямалăх çеç лартса памалла. Хĕлле витамин сахал, çавăнпа та вĕсене паха утă, йывăç турачĕсенчен çыхнă милĕк, йўçĕтнĕ купăста памалла. Кăркка чĕпписене пĕр уйăха çитиччен çеç пăхма йывăр. 5-6 куна çитиччен чăмăрла пĕçернĕ çăмарта, тăпăрчă, кĕвелĕк çитермелле. Теркăланă çăмартана авăртнă тулăпа е куккуруспа хутăштармалла, çиелтен вĕтетнĕ ешĕл çимĕç сапмалла. Пирвайхи вунă кунччен чĕпĕсене кашни 3 сехетрен çитермелле, пĕр уйăха çитнĕ тĕле – 4-5 хут. Уйрăм валашкара шултра хăйăр е вак чул пулмалла. Пăтратса панине (симĕс сухан, вĕлтĕрен, кĕвелĕк, комбикорм) виççĕмĕш эрнерен пама юрать. 4-5 уйăхран пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн авăртман тырă пама пуçламалла. Тулă, куккурус, урпа юраççĕ. Унсăр пуçне хăяр, арбуз кăмăллаççĕ. Кабачокпа кавăна, кăшмана тиркемеççĕ. Симĕс курăк çиеççĕ. Тĕрлĕ хурт-кăпшанкăпа тăранаççĕ.

Пĕçернĕ çĕр улмине тулă е куккурус хывăхĕпе хутăштарса парсан аванрах. Çапах та çĕр улмине ўсерехпе çеç памалла.

Чĕпĕсен умĕнче тăтăшах таса шыв кирлĕ. Ытла сивĕ ан пултăр: 15-18 градус тейĕпĕр. Йĕркеллĕ пăхса тăрсан 5 уйăхри кăркка 4-4,5 кг тайĕ.

### Ашĕ чăн та тутлă!

Чи усăллă та тутлă какай вăл. Ытти кайăк-кĕшĕк ашĕпе танлаштарсан кăркка çăвĕ А, Е витаминпа, микроэлементсемпе пуян, холестерин та сахал унта. Чăх какайĕнчен тутлăрах.

Кăркка ами нарăс вĕçĕнче пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче çăмарта тума тытăнать. Аçи пĕрре кăна пулсан вăл хăйĕн ĕçне тĕплĕ тăвать. Иккĕн пулсан пĕр-пĕринпе тăтăшах хирĕçеççĕ, çавна май çăмартисем тăрă пулаççĕ. Ытла пысăк та йывăр аçа (12 кг ытларах) пуснă чухне амин çурăмне пĕтĕмпех чĕрмелесе пĕтерме пултарать.

### Шĕвĕр вĕçлинчен – аçа, пуклаккинчен – ама

Ама йăвара çур кун е ытларах ларсан çăмарта пусса ларма хатĕрленет. Ун пеккине 2-3 кунччен 1-2 çăмарта хурса парса тĕрĕслемелле. Нумайччен ларсан 15-19 çăмарта хурса памалла. Шĕвĕр вĕçлĕ çăмартаран аçа тухать, пуклак вĕçлинчен – ама. Çăмартана çĕрле, кăркка хăйĕн йăвинче лăпкă ларнă вăхăтра хумалла, ун чухне вăл йăваран сиксе тухмĕ. Йăвапа юнашар тырă савăчĕпе шыв лартмалла. Пусса ларакан кăркка хăй тĕллĕн тăман чухне ăна кашни 2-3 кунтан йăваран çĕклесе кăлармалла: ĕçтĕр-çитĕр, уçăлса çўретĕр. Çак хушăра йĕпе ай сарăмне улăштармалла (хăшĕ-пĕри пĕр-пĕр çăмартине çĕмĕрме е йăварах тула тухма пултарать). 15-20 минутран амана каялла йăвана лартмалла. Чĕпĕсем 27-28 кунтан тухма пуçлаççĕ. Амăшĕнчен уйăрма кирлĕ мар вĕсене. Икĕ кунтан вĕсем хăйсемех çуначĕ айĕнчен тухма пуçлаççĕ. Çавăн чухне юлнă ытти çăмартана тĕрĕслемелле. Чĕпĕсĕррисене пăрахмалла. Чирлемесен, лайăх çисен чĕпĕсем хăвăрт ўсеççĕ. 3 уйăха çитиччен чĕпсене çумăр айне лексе йĕпенесрен сыхламалла. Йĕпеннĕ чĕпĕ чирлет, кайран сывалсан та йĕркеллĕ ўсеймест. Чĕпĕ çуначĕсене усса, куçне хупса ларнине асăрхасан пĕлсех тăрăр: унăн пыршăлăхĕ лайăх ĕçлемест. Паллах, антибиотик пама пулать, анчах çăварне уçса хура пăрăç пĕрчи (тутлă шăршăлли мар!) хурсан аванрах.

| ÇАНТАЛĂК Шупашкарта | Вăхăт | 10.01 | 11.01 | 12.01 | 13.01 | 14.01 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2-4 сехетре | –1 | –1 | –11 | –11 | –19 |
| | 14-16 сехетре | 0 | +1 | 0 | –6 | –8 |
| Юр çăвать | | – | ⁂ | ⁂ | ⁂ | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 758 | 759 | 758 | 755 | 753 |

**ВУЛАКАН – ВУЛАКАНА**

## Куянсене хăратма

Ял хĕрринче пурăннăран-ши – пирĕн пахчана мулкачсем иленнĕччĕ. Çамрăк улмуççи вĕсен айĕпĕпех хăрнă хыççăн чĕнмен хăнасене хăратмалли меслет шырама пуçларăм. Литр çурă кĕрекен пластик савăта пуçтартăм. Икшерĕн хурса шпагатпа çыхрăм, пăккисене илсе юлтăм. Унтан вĕсене кăшт çил вĕрнипех силленмелле йывăç тураттинчен çакса ятăм. Хĕвеллĕ кун хăратмăшсем йăлтăртатса çеç лараççĕ, пĕр-пĕринпе лексе чăштăртаттараççĕ, çил уланă вăхăтра вара ăнланмалла мар хăрушă сасă кăлараççĕ. Çакă катăк тутасене килĕшмерĕ курăнать, пахчана килме пăрахрĕç.

**Сергей ОСИПОВ.**

ХŸТЛĔХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

# Культурăллă-и эпир?

1-мĕш стр.

Пысăк хуласенче ĕçлесе пурăнаççĕ пулин те, культурăллă çынсем тетĕр-и вĕсене?

Вунă-çирĕм çул каялла вĕсен ашшĕсемпе амăшĕсем пĕрлешŷллĕ хуçалăхсен хăватне çĕклессишĕн ырмиканми ĕçленĕ, хĕлле те, çулла та. Хĕрŷ ĕç хыççăн культурăллă канма та пĕлнĕ. Эрехпе ашкăнман. Клуба кружоксене çŷретчĕç, спектакльсем, концертсем кăтартатчĕç, хут купăспа пулсан та ташă касĕсем тĕлĕнмелле йĕркеллĕ, асра юлмалла, чуна канăçлăх кŷмелле иртетчĕç. Чăвашсен ĕлĕкхи вăйă картисене аса илер-ха тата. Куç ытарайми илем! Нимĕнле культура ĕçченĕ те йĕркелесе пыман вĕт çак вăйăсене. Çамрăксем хăйсене валли хăйсем хĕрŷ ĕç хыççăн чун канмалăх чăн-чăн Илем тунă! Халĕ пире кăна туса пар, ăна илсе пар, вара янттипе ташлатпăр. Укçа тŷлесе. Клубсенче мар, кафесенче. Клубĕсене хупса пĕтернĕ ĕнтĕ. Ял тăрăхĕсен тĕп ялĕсенче кăна Культура çурчĕ ларса юлнă. Шкулсемпе клубсене, медицина пункчĕсемпе библиотекăсене хупакан халăх культурăллă-и? Вĕсене Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче те хупман. Халăха ухмахлатас тĕллевлĕ юхăм пуçарса ярса культурăран пистерес хăрушла, тăшманла ĕç пырать. Çакăншăн чи малтанах Мускаври телеканалсем айăплă.

Хамăр тата? Пирĕн чăн-чăн культура çуккишĕн кам айăплă?

...Культура – питĕ анлă пĕлтерĕшлĕ ăнлав. Кунта хăвна килте, обществăлла вырăнта йĕркеллĕ тытма пĕлнинчен пуçласа ĕçре, вĕренŷре, канура мĕнле кăтартни таранах кĕрет. Çавăнпа чи малтанах такамра айăп шырама пуçличчен (çынра айăп шырани те культурăсăрлăх палли) хамăра айăпламалла. Çемьере киревсĕр воспитани панă пулсан нимĕнле шкул та, клубпа библиотека та пирĕнтен культурăллă çын тăваймĕ. Хамăра хамăрăн çирĕп, пĕртен-пĕр тĕрĕс йĕркене хăнăхтарса пымалла. Пирĕнтен нумайăшĕ халĕ сŷтĕлсе кайнă. Демократи, ирĕклĕх тени темĕн те тума юранине пĕлтермест. Уйрăмах – киревсĕррине. Эпир правасене "качать" тăватпăр, хамăрăн таса тивĕç çинчен маннă. Çапла-и?

Пысăк культурăллă пулас тесен йĕркеллĕ пулмалла. Пур енĕпе те.

Хальлĕхе çапла çеç. Хăвна шанса панă ĕçре чипер ĕçле, паха продукци туса кăлар. Вĕренетĕн пулсан – лайăх вĕрен. Вĕренни хăвăншăн, такамшăн мар. Халăхшăн усăллă ĕçсенче хастар пул.

Урамра хут пăрахса хăвартăн, эсĕ – культурăсăр çын. Çынна сăлтавсăр кŷрентертĕн, юлташна е кŷрше кĕвĕçетĕн – каллех. Ĕçре ўрĕк-сўрĕк, вĕренŷре тăрăшмастăн – культурăсăр. Тутана хĕретниех, куç харшине хуратниех, чĕрнене сăрланиех, шукăль тумланниех – эсĕ пысăк культурăллă çын пулнине пĕлтермест. Чун тасалăхĕ, хăвна кирек ăçта та йĕркеллĕ тытни, ĕçре, вĕренŷре, канура сăпайлă та хастар пулни, çынсене те килĕшмелле тумланни тата ытти эсĕ культурăллă çын пулнине çирĕплетеççĕ.

Çитĕ. Нумай калаçни те культурăсăрлăх палли. Çавăнпа та хамăрăн чи таса тивĕçе – йĕркеллĕ çын пулма кирлине нихăçан та манар мар. Лайăх лаша пуласси тихаран, çын пуласси ачаран паллă теççĕ те – çемьере ачасене ырăпа усала уйăрса илме çине тăрсах хăнăхтарса пырар. Çак пархатарлă тивĕçе кунсерен пурнăçласа пымасан Раççейре чăн-чăн пысăк культурăллă çын та юлмĕ. Кая юлас марччĕ.

**Валерий МУРАВЬЕВ, çыравçă.**

## ШУТА ИЛМЕ

# Пур чух та усăллă мар

**Витаминсем кирлĕ пире, анчах виçеллĕ çеç.**

**Пулă çăвĕ.** Нумаях пулмасть тĕпчевçĕсем пулă çăвĕ простата ракне пуçарма пултарнине çирĕплетнĕ. Тĕпчеве 2 пин ытла арçын хутшăннă. Камсен юнĕнче омега-3 çу кислотин шайĕ питех те пысăк пулнă, çавсен ар парĕн шыççи аталанас хăрушлăх ўснĕ.

**Мультивитаминсем.** Онкологсен шучĕпе вăл е ку чире аталанма май паман витаминсемпе минералсем нумаях та мар. Франци тĕпчевçисем хăйсен ирĕкĕпе 6 çул таран мультивитаминсем ĕçсе пурăннă 8 пин çыннăн сывлăхне тĕпченĕ: витамин ĕçсе пурăннисем те ĕçменнисем пекех чĕрепе рак чирĕсемпе чирленĕ.

Мультивитаминсем çынна нихăш енчен те пулăшманнине çирĕплетсе панă ĕнтĕ. Йĕркеллĕ апат-çимĕç çисе пурăнакана нимĕнле витамин та кирлĕ мар тесе шухăшлаççĕ.

**С витамин.** Ученăйсем 11 çул хушши ирттернĕ тĕпчев çакна кăтартса панă: С витамин нумай (1000 мг) усă куракансен чылай чухне пŷрере чул пухăнать. Климакс вăхăтĕнче хĕрарăмсем С тата Е витаминсене 1 грамм таран ĕçсен те вăхăтсăр вилесси виçĕ хут ўсет.

**Кальци.** Арçын талăкне 1 г ытла кальци ĕçсен чĕре чирĕпе чирлес хăрушлăх, çавăн пекех пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса каясси 20 процент таран ўсет. Кальци кирлĕ-и? Апла йогурт е пĕр стакан сĕт ĕçмелле. Пулчĕ те.

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

# Çурăм çинче усăллăрах

? **Хăяккăн выртса çывăрма юрататăп. Анчах мăшăрăм çапла çывăрни сывлăхшăн сиенлĕ тесе вăрçать. Чăнласах та çапла-ши?**

Чи лайăххи – çурăм çинче çывăрни. Ўт йывăрăшĕ вăл е ку органа пусармасăр пĕр тан саралать. Çурăм шăмми кукăрăлнипе, остеохондрозпа, артритпа, сыпăсем ыратнипе, сколиозпа аптракансемшĕн çурăм çинче çывăрнинчен ырри çук.

Хăяккăн (майпа шурăм шăмми пĕр шайра пулмалла), чĕркуççине хуçлатса выртни те япăх мар. Анчах сулахай енне выртса çывăрма юрамасть: чĕрене йывăр килĕ.

Чи сиенли – хырăм çинче çывăрни: çыннăн пуçĕ хăяккăн пăхать, майсăр выртнипе мăйпа çурăм ыратма, остеохондроз чирĕ пушшех вăйланма пултарать. Майсăр выртнипе янах шăмми те шар курать, шăлсене шатăртаттарни те çакăнпа çыхăннă. Кăкăр пусăрăннипех кислород та кирлĕ пек пымасть.

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Пўрене сыватма.** Вĕреме кĕнĕ 1 литр шыва икĕ йĕкĕр ывăç чухлĕ лайăх çунă çĕр улми хуппи ярса пĕçермелле. Çĕр улми шывне кунне 3 хут, апат умĕн, çуршар стакан ĕçмелле. Хăвăра лайăх туйма пуçличчене.

**Кăкăр шыççи (мастит).** Услам çăва шăратмалла. Пусма таткине хайхи çупа йĕпетсе вĕриллех кăкăр çине хумалла, пленкăпа витсе ăшă япалапа пиелемелле.

**Ўслĕкрен.** Ниепле те иртсе кайман ўслĕкрен çакнашкал рецепт пулăшĕ: пĕрер кашăк пурăш çăвĕ (барсучий жир, аптекăра пур), алоэ сĕткенĕ, пыл, типĕ горчица, çăнăх илсе хутăштармалла. Хутăша ăшăтса çурăм çине сĕрмелле, пусма таткипе, пленкăпа витмелле, утиялпа лайăх витĕнсе çывăрма выртмалла.

**Радикулитран.** Тип çупа прополис настойки (1:1) хутăштармалла. Горчичнике çак хутăшпа сĕрсе ыратакан вырăна хумалла, ăшă тутăрпа çыхмалла.

**«Кил», «Сывлăх» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## ШЎТЛЕР-И?

– Мĕншĕн эсĕ ĕçмессерен куçна хупатăн?

– Арăма çĕнĕ çулта черкке çине пăхмастăп тесе шантарнăччĕ.

## КИРЛĔ ПУЛĔ

# Аппетита чакарма

**1 Апат çийиччен шыв ĕçмелле.** Апатланиччен 20-30 минут маларах хырăма тултарма пĕрер стакан шыв, сĕткен е чей ĕçмелле. Кун пек чухне сахалтарах çиетĕн. Апачĕ те лайăххах ирĕлет.

**2 Пăрăçлă та тăварлă çимĕç çиесрен асăрханмалла.** Техĕмлĕх кĕртекен çимĕçсем хырăмлăх сĕткенне кăларма, апла пулсан аппетита ўстерме пултараççĕ.

**3 Сĕтел çинче яланах улма-çырла пултăр.** Питĕ çиес килнĕ чухне хăвăра асаплантарма кирлĕ мар, пĕрер пан улми, апельсин, груша, абрикос, е виноград çимелле. Улма-çырлана тăтăшах чăмласан та самăрăлмастăр.

**4 Кĕвелĕк, турăх е йогурт ĕçмелле.** Йўçĕ сĕт продукчĕ хырăмлăха тултарнипе пĕрлех тутă тытма та пулăшĕ.

**5 Час-часах, анчах сахалшар çимелле.** Çак йĕркене пăхăнсан яланах тутă пулатăр, организм вара хăйне кирлинчен те сахалрах калори илет.

**6 Апатланиччен маларах пĕр татăк йўçĕ шăккăлат çимелле.** 2-3 татăк шăккăлат çини тем пек хытă çиес килнине те иртерĕ. Анчах ăна тўрех хыпса яма ан васкăр, киленсе ĕмнине нимĕн те çитмĕ. Ун пек чухне пылак çини, калори çителĕклĕ пулни тўрех пуç мимине çитет.

**7 Кофе вырăнне чей ĕçĕр.** Кофе аппетита ўстерет. Чей вара хырăмлăха тултарма пулăшать, апат валли вырăн сахал юлĕ. Сăмах май, чей çине лимон касăкĕпе çур чей кашăкĕ пыл хушсан хырăм выççи пĕрик сехетлĕхе манăçĕ.

**8 Пахча çимĕç салатне пăрçа е фасоль хушмалла.** Кăнтăрлахи апата пăрçа е фасоль хушнă салатран пуçласан ыттине çурри таран çинипех тăранатăр.

## СИППЕ КАЙТĂР

# Эмел вырăнне мандарин



Мандарина сухăньпе лайăх çумалла, хуппине шуратса батарей çинче типĕтмелле. Кайран ăна шыва ярса вĕретмелле (1:10). Кунне 2-3 хут 1/4 стаканшар ĕçмелле. Ўпкене ламмакаран тасатса кăларма ирсерен, выç варла, мандарин сĕткенне ĕçни усăллă. Иммунитета çирĕплетме вара 250 мл шур эрехе 2 кашăк вĕтетнĕ мандарин хуппи ярса 1 эрне тăрăлтарса лартмалла, сăрăхтармалла. Кунне 3 хут, апат умĕн 20 минут маларах 20-25 тумлам ĕçмелле.

# Шăмă сыппи шыççан

Тахçантанпах полиартритпа асапланакансене асаннесен меслечĕпе сипленме сĕнес килет: стакана 1 чĕрĕ çăмарта хумалла, унтан ăна хупламалăх 70 процентлă уксус эссенцийĕ ямалла. Стакана полиэтилен хутаçпа витсе 5-6 кунлăха тĕттĕм вырăна лартмалла. Çак хушăра çăмарта хуппи ирĕлмелле. Унтан 200 г услам çу хушса йывăç кашăкпа лайăх пăтратмалла. Тепĕр хут полиэтиленпа хупласа 5-6 кунлăха ăшă вырăна лартмалла. Пулса çитнĕ хутăш майонез евĕрлĕ пулмалла. Ăна сўхе сийпе (хулăн хурсан – пĕçертсе яма пултарать) ыратакан сыпăсене сĕрмелле, ăшă тутăрпа чĕркемелле.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### ПРОДАЮ

**1. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**2. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**3. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**5. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**6. Станки** для валяния валенок. Т.: 89278617589, 89373810585.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**10. Гравмассу, песок**, бой кирпича, **щебень**. Доставка. Тел. 89061355241.

**13. ОКНА** пластиковые, **ДВЕРИ** стальные. Заводское производство. Гарантия 5 лет. Рассрочка. Дешево. Т. 89276689303.

**14. Гравмассу,** гравий, **песок,** щебень, **керамзит.** Доставка. Т. 89053465671.

**25. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**24. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**31. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**32. Пластиковые ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 89875754704.

**33. ОКНА** пластиковые, стальные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89278404225.

**34. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**35. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**36.** Пластиковые **ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**47. Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дешево. Т. 89373866629.

**50. Отруби, зерно, к/корм.** Д-ка. Т. 89613412236.

**54. Пшеницу, ячмень, овес.** Т.: 89276666151, 89373731270.

**56. Ячмень, пшеницу, рожь,** кукурузу. Т. 8-917-669-26-53.

**60. Кобылу** жеребую – 45 тыс. руб., **жеребца** – 40 тыс. руб., **овец** Романовской и Цигейской пород на племя по 7 тыс. руб. Тел. 8-927-998-82-27.

**61. ВАЗ-2106** (1997 г. в., цвет белый, в хорошем состоянии). Цена 35000 руб. Т. 8-937-373-93-70.

### КУПЛЮ

**57. Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### УСЛУГИ

**18. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**26. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает любые жизненные проблемы. Т. 89063856628.

– Ремонт ТНВД
– Форсунки дизельные
– Компьютерная диагностика
– Капитальный и мелкий ремонт дизельных, легковых иномарок.
Тел.: 29-02-01, 8-927-667-17-34.

## ТУНТИ КУН, 13

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 4.05 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.25 «Две звезды» Новогодний выпуск
С 1.40 вещание на Москву и Московскую область осуществляется по кабельным и спутниковым сетям
2.20, 3.05 Х/ф «МЫ НЕ ЖЕНАТЫ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Муза и генерал. Секретный роман Эйтингона» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 «Аншлаг. Старый Новый год» 12+
0.45 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
1.45 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
3.15 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
4.10 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «РОМАНС О ВЛЮБЛЕННЫХ»
13.30 Д/ф «Между прошлым и будущим»
14.10 Т/с «БАЯЗЕТ»
15.10 Д/ф «Библиотеки мира»
15.40 Д/ф «Белый медведь»
16.40 «Владимир Минин. Монолог в 4-х частях»
17.05 К 85-летию Владимира Минина. Произведения С. Рахманинова и Г. Свиридова. Московский камерный хор под управлением В. Минина
18.05 Д/ф «Антуан Лоран Лавуазье»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.15 Премьера. «Правила жизни» Ток-шоу
20.40 Новогодний концерт Венского филармонического оркестра-2014
23.35 Х/ф «ГРЕЙС КЕЛЛИ»
1.10 М. Таривердиев. Концерт для скрипки с оркестром
1.45 «Мировые сокровища культуры»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+
1.30, 1.30 Х/ф «ОПЯТЬ НОВЫЙ!» 16+
3.25 Дикий мир 0+
4.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

## ЫТЛАРИ КУН, 14

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.40 Х/ф «ОТЕЛЬ «МЭРИГОЛД»: ЛУЧШИЙ ИЗ ЭКЗОТИЧЕСКИХ» 12+
1.55, 3.05 Х/ф «ВОЖДЬ КРАСНОКОЖИХ И ДРУГИЕ»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Драма на Памире. Приказано покорить» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ НЕ КАРТОШКА» 12+
23.50 Т/ф «Становление империи» 12+
1.00 «Честный детектив» 16+
1.35 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
3.00 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.40-9.55 Завтра начинается сегодня или Души прекрасные порывы
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15 «Наблюдатель»
11.15, 23.35 Х/ф «ГОЛОВОКРУЖЕНИЕ»
13.25 «Мировые сокровища культуры»
13.45, 20.15 Премьера. «Правила жизни» Ток-шоу
14.10 Т/с «БАЯЗЕТ»
15.10 «Острова»
15.55, 22.05 Д/с «Музейные тайны». «Берлинский музейный остров»
16.40 «Владимир Минин. Монолог в 4-х частях»
17.05 К 85-летию Владимира Минина. В. А. Моцарт. «Реквием» Московский камерный хор под управлением В. Минина
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 Д/ф «Город М»
20.45 Д/ф «Мир искусства Зинаиды Серебряковой»
21.25 «Игра в бисер»
22.45 К 85-летию Владимира Минина. «Монолог в 4-х частях»
1.40 Фортепианные миниатюры С. Рахманинова исполняет А. Гиндин
2.00 Профилактика на канале до 9.59

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+
1.30 Главная дорога 16+

## ЮН КУН, 15

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.40 Х/ф «ЛЮДИ ИКС: НАЧАЛО. РОСОМАХА» 16+
1.40, 3.05 Х/ф «ВСЕ О ЕВЕ»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Под властью мусора» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ НЕ КАРТОШКА» 12+
23.50 Т/ф «Золотой век Российской империи» 12+
1.05 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
2.40 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
3.35 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15, 23.35 Х/ф «ПТИЦЫ»
13.15 «Эрмитаж - 250»
13.45, 20.15 Премьера. «Правила жизни» Ток-шоу
14.10 Т/с «БАЯЗЕТ»
15.10 Д/ф «Мир искусства Зинаиды Серебряковой»
15.55, 22.05 Д/с «Музейные тайны». «Американский музей естественной истории»
16.40 «Владимир Минин. Монолог в 4-х частях»
17.05 К 85-летию Владимира Минина. Г. Свиридов. «Пушкинский венок» Московский камерный хор под управлением В. Минина
17.50, 21.10 «Мировые сокровища культуры»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Абсолютный слух»
20.40 Гении и злодеи. Владимир Дуров
21.25 «Больше, чем любовь»
22.45 К 85-летию Владимира Минина. «Монолог в 4-х частях»
1.30 Концерт Академического оркестра русских народных инструментов ВГТРК. Дирижер Н. Некрасов

### НТВ

6.00 Уважаемые телезрители! В связи с профилактическими работами, вещание телеканала начнется в 10.0. Приносим извинения за причиненные неудобства
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Первая кровь» 16+
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+

## КĔÇНЕРНИ КУН, 16

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.55 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.40 Х/ф «ЛЮДИ ИКС: ПЕРВЫЙ КЛАСС» 16+
2.00, 3.05 Х/ф «АВТОБУСНАЯ ОСТАНОВКА» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Ангелы с моря» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ НЕ КАРТОШКА» 12+
22.50 Х/ф «СВАДЬБА» 12+
0.15 Т/ф «Последний император. Русский урок» 12+
1.30 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
2.55 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00-9.55 Телеюрă
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15, 23.35 Х/ф «МАРНИ»
13.25, 18.40 «Мировые сокровища культуры»
13.45, 20.15 Премьера. «Правила жизни» Ток-шоу
14.10 Т/с «БАЯЗЕТ»
15.10 «Больше, чем любовь»
15.55, 22.05 Д/с «Музейные тайны». «Художественно-исторический музей в Вене»
16.40 «Владимир Минин. Монолог в 4-х частях»
17.05 К 85-летию Владимира Минина. Дж. Россини. «Маленькая торжественная месса» Московский камерный хор под управлением В. Минина
19.15 Главная роль
19.30 Черные дыры. Белые пятна
20.40 Д/ф «Хрустальные дожди. Татьяна Пилецкая»
21.20 «Культурная революция»
22.45 К 85-летию Владимира Минина. «Монолог в 4-х частях»
1.40 Пьесы для скрипки исполняет Н. Борисоглебский

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.35 Спасатели 16+
9.05 «Медицинские тайны» 16+
9.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+
1.30 «Дачный ответ» 0+
2.35 Дикий мир0+
3.05 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

## ЭРНЕ КУН, 17

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 5.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 4.35 «В наше время» 12+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
22.30 Новый год на Первом
0.40 Х/ф «ЛЮБОВЬ ВНЕ ПРАВИЛ» 16+
2.45 Х/ф «РЕКА НЕ ТЕЧЕТ ВСПЯТЬ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Людмила Зыкина. Бриллианты одиночества» 12+
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
14.15 Дневник Сочи 2014
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 «Смеяться разрешается»
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Х/ф «НОВЫЕ ПРИКЛЮЧЕНИЯ АЛАДДИНА»
23.05 «Живой звук»
1.15 Х/ф «ТОЛЬКО ТЫ» 12+
3.15 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.10 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
9.25-10.05 Виктор Петров. 30 лет на сцене. 3 часть
11.30-11.50 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.15 Новости культуры
10.20 Д/ф «Сокровища «Пруссии»
11.05, 23.35 Х/ф «СЕМЕЙНЫЙ ЗАГОВОР»
13.00 «Письма из провинции»
13.30 Т/с «БАЯЗЕТ»
15.10 Д/ф «Ни о чем не жалею»
15.50 «Царская ложа» Мариинский театр
16.35 Д/ф «Ускорение. Пулковская обсерватория»
17.05 В честь Владимира Минина. Юбилейный концерт в БЗК
19.20, 1.55 Искатели. «Печать хана Гирея»
20.10 «Линия жизни»
21.00 Х/ф «ПАВЕЛ КОРЧАГИН»
22.45 К 85-летию Владимира Минина. «Монолог в 4-х частях»
1.30 Й. Гайдн. Концерт для 4-х солирующих инструментов с оркестром
2.00 «Мировые сокровища культуры»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.10 «Жизнь как песня: Стас Пьеха» 16+
0.30 Х/ф «ОШИБКА СЛЕДСТВИЯ» 16+
2.20 Дикий мир 0+
2.40 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

## ШĂМАТ КУН, 18

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 «Ералаш»
6.30 Х/ф «ЗЕМЛЯ С ВЫСОТЫ ПТИЧЬЕГО ПОЛЕТА»
7.35 «Играй, гармонь любимая!»
8.20 М/ф «София Прекрасная»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 К юбилею актера. «Василий Лановой. «Честь имею!» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «Ледниковый период»
16.10 «Евгений Плющенко. Жизнь продолжается» 12+
17.15 «Угадай мелодию» 12+
18.15 «Кто хочет стать миллионером?»
19.15 «Минута славы. Дорога на Олимп!» 12+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Шерлок Холмс: Знак трех» 12+
0.45 Х/ф «ЕЛИЗАВЕТА» 16+
3.05 Х/ф «МОЛОЖЕ СЕБЯ И НЕ ПОЧУВСТВУЕШЬ» 12+
4.35 «В наше время» 12+
5.25 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

4.40 Х/ф «ОХОТА НА ЛИС»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.20 «Военная программа»
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет» «Нижнесвирский заповедник» «Экстрим по-каталонски»
11.20, 4.50 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 16+
12.25 Х/ф «ВСЕ НЕ СЛУЧАЙНО» 12+
14.30 Субботний вечер
16.40 Шоу «Десять миллионов»
17.45 «Кривое зеркало. Театр Евгения Петросяна» 16+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «НЕ УХОДИ» 12+
0.40 Х/ф «ПТИЦА СЧАСТЬЯ» 12+
2.35 Горячая десятка 12+
3.45 Комната смеха

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш Ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 Библейский сюжет
10.35 Х/ф «ДАЧНИКИ»
12.15 Д/ф «Без скидок на возраст. Борис Бабочкин»
12.55 Пряничный домик. «Пламя свечи»
13.20 М/ф «Дикие лебеди»
14.20 Красуйся, град Петров! Царское Село. Екатерининский парк
14.45 К юбилею Василия Ланового. «Вася высочество»
15.25 Спектакли-легенды. Юлия Борисова, Василий Лановой, Михаил Ульянов в спектакле театра им. Евг. Вахтангова «АНТОНИЙ И КЛЕОПАТРА» Постановка Евгения Симонова. Запись 1980 года
17.45 Д/ф «Чувственная математика»
19.30 Х/ф «ЧАПАЕВ»
21.00 Андрей Макаревич и «Машина времени» 40 лет творческой деятельности. Концерт в «Олимпийском»
22.45 Х/ф «ПСИХО»
0.35 «РОКовая ночь» с Александром Ф. Скляром. «Статус Кво» Концерт в Монтре»
1.45 М/ф «Загадка Сфинкса»
1.55 «Легенды мирового кино» Лев Кулешов
2.00 2.25 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
2.50 Д/ф «Эдгар По»

### НТВ

5.40, 2.20 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.25 Х/ф «РЖАВЧИНА» 16+
17.15 Х/ф «ЛЕНИН. КРАСНЫЙ ИМПЕРАТОР» 12+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
19.50 «Новые русские сенсации. Примадонна с младенцами. Полная версия» 16+
21.50 Ты не поверишь! 16+
22.45 «Жизнь как песня: Татьяна Буланова» 16+
23.50 Х/ф «ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
1.45 Авиаторы 12+

## ВЫРСАРНИ КУН, 19

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 «Ералаш»
6.40 Х/ф «ЗЕМЛЯ С ВЫСОТЫ ПТИЧЬЕГО ПОЛЕТА»
7.45 «Служу отчизне!»
8.15 М/ф «София Прекрасная»
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 Россия от края до края. «Большой Кавказ» 12+
13.15 «Свадебный переполох» 12+
14.10 Х/ф «ПУТЕШЕСТВИЯ ГУЛЛИВЕРА» 12+
15.40 Х/ф «СЛУЧАЙНЫЕ ЗНАКОМЫЕ» 12+
17.35 «Анна Нетребко. «И тут выхожу я!»
18.40 «Кубок профессионалов»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Повтори!» Пародийное шоу 16+
0.25 Х/ф «РЕЗНЯ» 16+
С 2.00 вещание осуществляется по кабельным и спутниковым сетям
1.55 Х/ф «ЖИЛЕЦ» 16+
3.45 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.25 Х/ф «ГОРОД НЕВЕСТ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама»
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Городок» Дайджест
11.45, 14.30 Т/с «ВОЕННАЯ РАЗВЕДКА. СЕВЕРНЫЙ ФРОНТ» 12+
16.15 «Смеяться разрешается»
18.00 Х/ф «ЛЮБОВЬ ПО РАСПИСАНИЮ» 12+
20.00 Вести недели
21.30 Х/ф «МЕЧТАТЬ НЕ ВРЕДНО» 12+
23.30 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
1.25 Х/ф «ПОМНИ» 16+
2.00 Вещание по кабельным сетям с 2.00
3.40 «Планета собак»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 21.20 «Праздники» Крещение Господне
10.35 Х/ф «ОЧЕРЕДНОЙ РЕЙС»
12.05 «Легенды мирового кино» Георгий Юматов
12.35 «Россия, любовь моя!» Ведущий Пьер Кристиан Броше. «Культура тувинцев»
13.05 М/ф «Чиполлино» «Варежка»
13.55 «Что делать?»
14.40 Андрей Макаревич и «Машина времени» 40 лет творческой деятельности. Концерт в «Олимпийском»
16.25 «Искатели» «Тайна Абалакской иконы»
17.10 Д/ф «Обезьяний остров»
18.00 Итоговая программа «Контекст»
18.40 К юбилею киностудии. «Мосфильм» 90 шагов»
18.55 Х/ф «БОРИС ГОДУНОВ»
21.50 «В гостях у Эльдара Рязанова» Творческий вечер Алексея Петренко
23.00 Элина Гаранча, Алессандро Корбелли, Рэйчел Даркин, Патриция Рисли в опере Джоаккино Россини «ЗОЛУШКА»
2.00 Внимание! Профилактика с 2.00 до 3.0

### НТВ

6.05, 2.05 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
10.55 «Чудо техники» 12+
11.25 «Поедем, поедим!» 0+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.25 Х/ф «РЖАВЧИНА» 16+
17.15 Х/ф «ЛЕНИН. КРАСНЫЙ ИМПЕРАТОР» 12+
18.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа»
19.50 Х/ф «Я - АНГИНА!» 16+
23.35 «Жизнь как песня: Сергей Чумаков» 16+
0.40 «Школа злословия» Татьяна Горяева 16+
1.30 Авиаторы 12+
4.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

## СĂНАВ

• Сивĕтес умĕн кăмакари кăвар хĕрлĕ пулать, ăшăтас умĕн – шурăрах. Кăмакари вутă начар чĕрĕлсен – çанталăк ăшăтать.

• Çăлтăрсем сикни – сивĕтессе.

• Сăртра юр нумай пулсан çырла нумай пулать.

• Кушак сĕтел урине чавсан хĕлле тăман тухать теççĕ.

• Кÿлĕ пăрĕ яка çутăлса шăнсан тырă начар пулать.

• Кăшарни эрни ăшă пулсан тырă вырнă чух сивĕ пулĕ.

• Сурхури кун юр вĕçтерсен мăйăр нумай пулĕ.

## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ



### Микул пичче путишĕсем

– Мĕнле шутлатăн, Микул, урăх планетăсем çинче пурнăç пур-ши?

– Ну, ыйту паратăн та вара, Хветĕр. Çĕр çинче те пурнăç çук, таста тÿпере ăстан пурăнччăр çынсем?!

***

– Микул, эсĕ хуняму патне мĕншĕн час-час килсе çÿреместĕн?

– Кĕрÿ ĕçке яраннă тесе сăмахласран хăратăп.

***

Почтальон çыру тыттарчĕ. Камран-ши? Конверта йăпăр-япăр уçрăм. Ух... налук инспекцийĕнчен! Виçĕ машина, виçĕ гараж иккен манăн. Вĕсемшĕн налук тÿлеме ыйтаççĕ.

Ăстан тупăннă-ши манăн çакăн чухлĕ пурлăх? Э-э, тавçăртăм. Ывăлсем пĕрин хыççăн тепри манран паспорт ыйтнăччĕ. Вăт пуйтарнă та мана! Налук тÿлесех пенси укçи пĕтет.

А.ТАГАН.



# 2014

**ЯНВАРЬ • КĂРЛАЧ**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ЫТ | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ЮН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| КÇ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ЭР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| ШМ | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| ВР | 5 | 12 | 19 | 26 | |

**ФЕВРАЛЬ • НАРĂС**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 3 | 10 | 17 | 24 |
| ЫТ | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| ЮН | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| КÇ | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ЭР | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ШМ | 1 | 8 | 15 | 22 | |
| ВР | 2 | 9 | 16 | 23 | |

**МАРТ • ПУШ**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| ЫТ | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| ЮН | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| КÇ | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| ЭР | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| ШМ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |
| ВР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | |

**АПРЕЛЬ • АКА**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ЫТ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ЮН | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| КÇ | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| ЭР | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| ШМ | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| ВР | 6 | 13 | 20 | 27 | |

**МАЙ • ÇУ**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| ЫТ | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ЮН | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| КÇ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ЭР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ШМ | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| ВР | 4 | 11 | 18 | 25 | |

**ИЮНЬ • ÇĔРТМЕ**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ЫТ | | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| ЮН | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| КÇ | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| ЭР | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| ШМ | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| ВР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |

**ИЮЛЬ • УТĂ**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ЫТ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ЮН | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| КÇ | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| ЭР | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| ШМ | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| ВР | 6 | 13 | 20 | 27 | |

**АВГУСТ • ÇУРЛА**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| ЫТ | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| ЮН | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| КÇ | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ЭР | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ШМ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ВР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |

**СЕНТЯБРЬ • АВĂН**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | 1 | 8 | 15 | 22 | 28 |
| ЫТ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ЮН | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| КÇ | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| ЭР | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| ШМ | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| ВР | 7 | 14 | 21 | 28 | |

**ОКТЯБРЬ • ЮПА**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ЫТ | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ЮН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| КÇ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ЭР | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| ШМ | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| ВР | 5 | 12 | 19 | 26 | |

**НОЯБРЬ • ЧŸК**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | | 3 | 10 | 17 | 24 |
| ЫТ | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| ЮН | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| КÇ | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ЭР | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ШМ | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ВР | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |

**ДЕКАБРЬ • РАШТАВ**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ТН | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ЫТ | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ЮН | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| КÇ | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| ЭР | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| ШМ | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| ВР | 7 | 14 | 21 | 28 | |

## «Хресчен сасси» – ял-йыш хаçачĕ. Килсеренех янратăр ячĕ!

# Урхамахсем тăраççĕ тапăртатса...

Тĕнчере 100 тĕрлĕ лаша-мĕн. Чăваш та уйăрать вĕсене: сăхăм, çăрха, çӳрен, тĕпри, турă, хушка лаша... Йĕпреç районĕнчи "Агропромкомплект" тулли мар яваплă пĕрлешӳре паянхи куна ĕç лаши вите тулли. Ахаль йышшисем мар, ăратлисем. 2009 çул вĕçĕнче тата 2010 çул пуçламăшĕнче Мари республикинчи ăратлă выльăх ĕрчетекен "Семеновский" хуçалăхран 99 пуç илсе килнĕ те лаша ĕрчетес ĕçе Чăваш Енре пуçарса янă. Хальхи вăхăтра "Агропромкомплект" хăй те ăратлă лаша ĕрчетсе ыттисене сутать. Çапла ĕçлеме вăл официаллă статус илнĕ. Лаша шучĕ 165 пуçа çитнĕ: кĕсрисем те,ăйăрĕсем те пур.

"Русский тяжеловоз" текен ĕç лаши сĕтлĕ пулнипе палăрать, çавăнпа кумыс хатĕрлесси çинчен те шухăшлаççĕ ертӳçĕсем. Ирçе-çармăссенчен мĕнрен кая эпир? Вĕсем хатĕрлесе сутаççĕ-çке çак сиплĕ юрвара.

Ĕç лашисен хушшинче спортра усă кураканнисем те пур пĕрлешӳре. Хальлĕхе 17 пуç.

Лаша ял çыннишĕн ют выльăх мар, анчах та ăна паян куллен кураймастăн. Çакна пула тунсăхлать те уншăн вată çын. Ара, ял хуçалăхĕнче унсăр ниепле те май килмен-çке. Ватă çынсен кунĕнче ветеринари тытăмĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисене Йĕпреç районĕнчи ветеринари станцийĕн ертӳçисем "Агропромкомплект" пĕрлешĕвĕн лаша фермине илсе кайнă. Унти ĕç-пуçпа паллаштарнă. Чĕлхесĕр январсем аслă ăру çыннисене кăмăлпа йышăннă, ачашлаттарма та хирĕçлемен. Лаша та этем чунне туять. Тĕпчевçĕсем вăл сасă тăрăх çын савăннине, хурланнине уйăрма пултарни пирки пач та иккĕленмеççĕ.

**Ирина НИКИТИНА.**

ЫЙТУ–ХУРАВ

# Хуппи хăйпăнать

**? Иртнĕ çул хĕл касна хысçăн улмуççин хуппи хăйпăнма пуçланăччĕ. Çимĕçĕ питĕ сахал пулчĕ. Каллех хĕле кĕтĕмĕр ĕнтĕ. Нимĕн те тумарăм. Çуркунне мĕн тумаллаши ун пек йывăçа?**

**Алексей ИВАНОВ.**
**Шупашкар районĕ,**
**Вăрманкас ялĕ.**

Йывăç хуппи тĕрлĕ сăлтавпа хăйпăнма пултарать. Пĕрремĕшĕнчен, хĕлле е çур пуçламăшĕнче çĕрлехипе кăнтăрлахи температура уйрăмлăхĕ çав тери пысăк пулнипе йывăç хуппи айĕ хĕрсе-шанса тăнă май çĕрнипе. Иккĕмĕшĕнчен, рак чирĕ ернипе. Йывăç хуппи вуллинчен кăшт çеç уйрăлнă пулсан ăна сывă тĕртем тухиччен хырса пăрахмалла, унтан сад маçĕпе (е замазкăпа) сĕрсе пир пусмапа е марльăпа çыхмалла. Енчен те хуппи лапкăшĕпех сĕвĕнет пулсан, йывăçа çăлса хăвараймăн, касма тивĕ.

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕпредактор –56-00-67,
тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

http:// www.atal-volga.com,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ. «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа
17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 12 Тираж 22459

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.